А. Т. ТРОФИМОВ

# ЧӐВАШ ЧӖЛХИ

ПУҪЛАМӖШ ШКУЛӐН
1-мӗш КЛАСӖНЧЕ
ВӖРЕНМЕЛЛИ УЧЕБНИК

ЧӐВАШГОСИЗДАТ — 1949

А. Т. ТРОФИМОВ

Обязательный экземпляр
доставлен
Чувашской Книжной Палатс
26 мая 1949
№ 107

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИ

ПУÇЛАМĔШ ШКУЛĂН
I-мĕш КЛАСĔ ВАЛЛИ

*Чăваш АССР Çутĕç министерстви çирĕплетнĕ*

Иккĕмĕш издани валли *Ф. А. Шапошников* юсаса хатĕрленĕ

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1949

# ТУПМАЛЛИ.


| | | Стр. |
|---|---|---|
| 1 §. | Предложени . . . . . . . . . . . . . . . . . | 3 |
| 2 §. | Картинăсем тăрăх предложенисем тăвасси . . . | 5 |
| 3 §. | Япаласем çинчен предложенисем тăвасси . . . | 6 |
| 4 §. | Сăмах . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . | 7 |
| 5 §. | Сăмах сыпăкĕ . . . . . . . . . . . . . . . | 9 |
| 6 §. | Сăмахсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси | 13 |
| 7 §. | Вĕреннине аса илни . . . . . . . . . . . . | 15 |
| 8 §. | Сасăсемпе саспаллисем . . . . . . . . . . . | 16 |
| 9 §. | Чăваш чĕлхинчи саспаллисем (алфавит) . . . . | 17 |
| 10 §. | Предложенин малтанхи сăмахне пысăк саспаллипе пуçласа çырасси . . . . . . . . . . | 19 |
| 11 §. | Çын ячĕсене, хушамачĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çырасси . . . . . . . . . . . . . | 20 |
| 12 §. | Выльăх-чĕрлĕхсен уйрăм ячĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çырасси . . . . . . . . . . | 23 |
| 13 §. | Япаласем . . . . . . . . . . . . . . . . | 24 |
| 14 §. | Тĕрлĕ япаласем . . . . . . . . . . . . . | 28 |
| 15 §. | Кам мĕн тăвать? . . . . . . . . . . . . . | 31 |
| 16 §. | Картинăпа ĕçлесси . . . . . . . . . . . . | 34 |
| 17 §. | Япаласем çинчен, вĕсем мĕн туни çинчен аса илни | 36 |
| 18 §. | Уçă сасăсемпе хупă сасăсем . . . . . . . . | 37 |
| 19 §. | Уçă саспаллисем . . . . . . . . . . . . . | 39 |
| 20 §. | Хытă тата çемçе уçă сасăсем . . . . . . . | 42 |
| 21 §. | Хупă саспаллисем . . . . . . . . . . . . . | 44 |
| 22 §. | Çемçетекен паллă (ь) çырасси . . . . . . . | 45 |
| 23 §. | Э, е, ё, ю, я саспаллиллĕ сăмахсене çырасси | 47 |
| 24 §. | Б, г, д, ж, з саспаллисене çырасси . . . . . | 51 |
| 25 §. | Ф, ц, щ, о саспаллисене çырасси . . . . . . | 52 |
| 26 §. | Вĕреннине пĕтĕмĕшпе аса илни . . . . . . . . | — |



Редактор *А. С. Отачкин* Техредактор *Н. Степанов*

НТ 00299. Сдано в производство 29.IV. 1949 г. Подписано к печати 16. V. 1949 г. Тираж 30000 экз. Заказ № 771. Объем 3,75 п./л.

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при Совете Министров ЧАССР.
*Гор. Чебоксары, Володарского, 5.*

## 1 §. Предложени.



Амӑшӗ ҫӗлет.
Ывӑлӗ вулать.
Хӗрӗ ҫырать.

Ҫакӑнта миҫе предложени?

Малтанхи предложенире кам ҫинчен калanӑ? Иккӗмӗшӗнче кам ҫинчен калanӑ? Виҫҫӗмӗш предложенире кам ҫинчен калanӑ?

Хӗвел хӗртет. Юр ирӗлет.
Ҫул хуралать. Ҫырмара шыв юхать.

Эсир миçе предложени вуларăр?

Малтанхи предложенире мĕн çинчен каланă? Иккĕмĕш предложенире мĕн çинчен каланă? Виççĕмĕш предложенире мĕн çинчен каланă?

*1-мĕш хăнăхтару.* Çак калава сасăпа вуласа парăр.

## Ирхине.

Автан авăтрĕ. Тул çутăлчĕ. Хĕвел тухрĕ. Ял вăранчĕ. Ĕç пуçланчĕ.

Çакăнта миçе предложени?

Вуланă чухне эсир миçе хут чарăнатăр?

Малтанхи предложенире мĕн çинчен каланă? Иккĕмĕшĕнче мĕн çинчен каланă? Виççĕмĕшĕнче мĕн çинчен каланă? Тăваттăмĕш предложенире мĕн çинчен каланă? Пиллĕкмĕшĕнче мĕн çинчен каланă?

*2-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр.

Эпир кĕнеке вуларăмăр.
Эпир юрларăмăр.
Эпир предложенисем çыртăмăр.

Предложение пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ.
Предложени хыççăн точка лартаççĕ.

*3-мĕш хăнăхтару.* Çак калава вуласа тухăр.

## Хĕлле.

Юр çуса лартрĕ çанталăк сивĕтрĕ пĕвесем шăнса ларчĕç ачасем конькипе ярăнаççĕ.

Çак калава вулама мĕншĕн йывăр?

Шутласа пăхăр-ха, унта миçе предложени?

Малтанхи предложение вулăр. Малтанхи предложенире мĕн çинчен калană?

Иккĕмĕш предложение вулăр. Унта мĕн çинчен калană?

Виççĕмĕш предложенире мĕн çинчен калană?

Тăваттăмĕшĕнче камсем çинчен калană?

*4-мĕш хăнăхтару.* „Хĕлле" калава предложенисем çине уйăрăр, унтан çырса илĕр.

*5-мĕш хăнăхтару.* „Пирĕн класс" ятлă калава предложенисем туса пайлăр та çырса илĕр. Кашни предложение пысăк саспаллипе пуçласа çырăр. Предложени хыççăн точка лартăр

## Пирĕн класс.

Пирĕн класс пысăк класра питĕ çутă класс урайĕ таса партăсем те таса класра ăшă эпир тăрăшса вĕренетпĕр.

## 2 §. Картинăсем тăрăх предложенисем тăвасси.



Пĕрремĕш картина çине кама ӳкернĕ? Пионер мĕн тăвать?

Иккĕмĕш картина çине кама ӳкернĕ? Кĕтӳçĕ мĕн тăвать?

Виççĕмĕш картина çине кама ӳкернĕ? Пулăçă мĕн тăвать?



Ытти картинăсем çине мĕн ӳкернĕ?

Йытă мĕн тăвать? Автан мĕн тăвать? Кушак мĕн тăвать?

*6-мĕш хăнăхтару.* Çакăнта ӳкернĕ картинăсене пăхса, вĕсем тăрăх пурин çинчен те пĕрер предложени туса калăр.

*7-мĕш хăнăхтару.* Картинăсем тăрăх тунă тăвата предложение тетрадьсем çине çырăр.

Тĕслĕх: *Йытă вĕрет.*

## 3 §. Япаласем çинчен предложенисем тăвасси.

Класра мĕнле япаласем пур? Урайĕнче мĕн ларать? Сĕтел çинче мĕн пур? Партăсем çинче мĕн пур? Шкаф ăçта ларать? Шкафра мĕн пур? Стенасем çинче мĕнсем çакăнса тăраççĕ?

Класра халĕ камсем пур? Учитель ăçта тăрать? Ачасем ăçта лараççĕ? Кам ыйтать? Камсем калаççĕ?

*8-мĕш хăнăхтару.* Класри кашни япала çинчен пĕрер предложени туса калăр.

Тĕслĕх: *Класра сĕтел пур. Кĕнеке сĕтел çинче выртать.*

*9-мӗш хӑнӑхтару.* Килти выльӑхсем ҫинчен предложенисем туса калӑр. Ҫав предложенисене тетрадьсем ҫине ҫырӑр.

Тӗслӗх: *Лаша кӗҫенет.*

Лаша... Ӗне... Сурӑх... Сысна... Йытӑ... Кушак...

Хушмалли сӑмахсем: *кӗҫенет, мӗкӗрет, макӑрать, нӑриклетет, вӗрет, мӑрлатать.*

Хӑвӑр ҫырнӑ предложенисене сасӑпа вуласа парӑр. Кашни предложени хыҫҫӑн кӑшт чарӑнса тӑрӑр.

*10-мӗш хӑнӑхтару.* Килти кайӑксем ҫинчен предложенисем тӑвӑр. Предложенисене тетрадьсем ҫине ҫырӑр та сасӑпа вуласа парӑр.

Чӑх... Хур... Кӑвакал... Кӑркка...

Хушмалли сӑмахсем: *какалать, каклатать, нартлатать, кӑрӑклатать.*

## 4 § Сӑмах.

Ҫак предложенисене сасӑпа вулӑр.

1. Ӑшӑ ҫу иртрӗ.
2. Сивӗ хӗл ҫитрӗ.
3. Кӑвак пӗлӗт хупланчӗ.
4. Хӗвелтарсапытанчӗ.
5. Ҫеҫенхирҫаралчӗ.

Мӗншӗн тӑваттӑмӗшпе пиллӗкмӗш предложенисене вулама йывӑр?

Предложенисем сӑмахсенчен пулаҫҫӗ.
Предложенири кашни сӑмаха уйрӑм ҫыраҫҫӗ.

*11-мӗш хӑнӑхтару.* Шутласа пӗлӗр: малтанхи предложенире миҫе сӑмах? Иккӗмӗшӗнче миҫе сӑмах?

Тăваттăмĕш предложенири сăмахсене уйрăммăн калăр. Унта миçе сăмах?

Пиллĕкмĕш предложенири сăмахсене уйрăммăн калăр. Унта миçе сăмах?

*12-мĕш хăнăхтару.* Çырса илĕр.

*Хура вăрман хумханать.*
*Хура лаша хартлатать.*

*13-мĕш хăнăхтару.* Çак калава вулăр.

## Çил-тăман.

Çанталăк тĕксĕмленчĕ. Сивĕ çил вĕрет. Юр хытă çăва пуçларĕ.

Выльăхсем ăшă картара тăраççĕ. Кайăксем хӳтте кĕрсе пытаннă.

---

«Çил-тăман» ятлă калавра миçе предложени?
Малтанхи предложенире миçе сăмах?
Иккĕмĕш предложенире миçе сăмах?
Виççĕмĕш предложенире миçе сăмах?
Тăваттăмĕш предложенире миçе сăмах?
Пиллĕкмĕш предложенире миçе сăмах?

*14-мĕш хăнăхтару.* Икĕ сăмахлă предложенисем тăвăр (пионер çинчен, ху çинчен, хĕл çинчен, çил çинчен, юр çинчен).

*15-мĕш хăнăхтару.* Виçĕ сăмахлă предложенисем тăвăр (кирек кам çинчен е кирек мĕн çинчен).

*16-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр те сасăпа вуласа парăр.

Тракторист суха тăвать. Колхозниксем тырă акаççĕ. Варук инке ĕнесем пăхать.

> Пирĕн калаçу сăмахсенчен пулать.
>
> Сăмахсене эпир калатпăр, сăмахсемпе юрлатпăр.
>
> Сăмахсене ыттисем каланă чухне эпир итлетпĕр.
>
> Сăмахсене кĕнеке çине пичетлесе панă.
>
> Сăмахсене эпир вулатпăр, çыратпăр.
>
> Сăмахсенчен эпир предложенисем тăватпăр.

*17-мĕш хăнăхтару.* Ик-виç сăмахлă икĕ предложени тăвăр та тетрадьсем çине çырăр.

## 5 §. Сăмах сыпăкĕ.

Çак сăвва пурте пĕр харăс калăр (е кĕввипе юрласа тухăр).

Пĕчĕк çеç путене
Сарă тулла юратать.

*18-мĕш хăнăхтару.* Юрă сăмахĕсене çакăнта кăтартнă пек пайласа калăр (е пурĕ пĕрле юрласа тухăр).

Пĕ-чĕк çеç пу-те-не
са-рă тул-ла ю-ра-тать.
Кол-хоз а-чи
пи-о-не-ра ю-ра-тать.
Ю-ра-тать, ю-ра-тать,
пи-о-не-ра çы-рă-нать.

Юрă сăмахĕсене алă çупса вулăр (е юрлăр). Сăмахăн кашни пайне каланă чухне алла пĕр хут çупса илĕр.

Пи-о-нер, пи-о-нер,
пур а-ча-шăн пул при-мер!
Çи-рĕп ле-ни-нец пул-ма
тим-лĕн, тим-лĕн вĕ-ре-нер.
Ста-лин ат-те сă-мах-не
от-ряд-сен-че вĕ-ре-нер!

Çак юрра пурте пĕр харăс калăр (е юрлăр).

Юрă сăмахĕсене çакăнта кăтартнă пек пайласа калăр.

Юрă сăмахĕсене тата тепĕр хут алă çупса вулăр; сăмахăн кашни пайне каланă чух алла пĕр хут çупса илĕр.

Вуланă чухне сăмахсене сыпăкăн-сыпăкăн татса калама пулать.

Çак сăмахсене пурне те пĕрле сыпăкăн-сыпăкăн татса вулăр.

Лап-ка, лап-ка юр çă-вать,
мул-кач си-кет, йĕр тă-вать.

*19-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвва пурте пĕрле пĕр харăс вулăр, унтан çырса илĕр.

## Мă-кăнь.

Мă-кăнь çеç-ки çу-рăл-сан,
ки-лет пах-ча и-ле-мĕ.
Мă-кăнь çеç-ки тă-кăн-сан,
ка-ять пах-ча и-ле-мĕ.

Сасăпа вулăр.

Пĕр сыпăклă сăмахсем: *юр, вир, хир, шыв, ят, хĕл, хыр, ял, шкул.*

Икĕ сыпăклă сăмахсем: *автан, арман, мулкач, çĕлĕк, сăхман, атте, анне, уйăх, эрне.*

Виçĕ сыпăклă сăмахсем: *кĕнеке, пионер, пулăçă, хуралçă, хурама, хурăнлăх, самолёт, пулемёт.*

Тăватă сыпăклă сăмахсем: *вĕренекен, вĕрентекен, рабочисем, колхозниксем.*

Хăшпĕр сăмахсенче пилĕк сыпăк е ытларах та пулать.

Сăмахран: *кĕреплесемпе, çавăркаламасăр.*

*20-мĕш хăнăхтару.* Çак сăмахсене вулăр. Вăл сăмахсенче кашнинче миçе сыпăк?

Пӳрт, çурт, хурт, хур, пыл.
Вăрман, кашкăр, курак, çава.
Кĕркунне, вĕрене, такана, чӳрече.
Кăвакарчăн, автомобиль, саспаллисем.

*21-мĕш хăнăхтару.* „Юр кĕлетке" ятлă калаври сăмахсене суйласа çырса илĕр: малтан пĕр сыпăклă сăмахсене, унтан икĕ сыпăклă сăмахсене, юлашкинчен виçĕ сыпăклă сăмахсене çырăр.

## Юр кĕлетке.

Хĕл çитнĕ. Юр çуса лартнă. Çанталăк сивех пулман. Ачасем юртан çын кĕлетки тунă. Кĕлеткен аллине шăпăр тыттарнă.

*22-мӗш хӑнӑхтару.* Пӗр сыпӑклӑ сӑмахсем пиллӗк тупса калӑр.

Икӗ сыпӑклӑ сӑмахсем пиллӗк тупса калӑр.

Виҫӗ сыпӑклӑ сӑмахсем пиллӗк тупса калӑр.

*23-мӗш хӑнӑхтару.* Кунта икӗ сыпӑклӑ сӑмахсен пӗр сыпӑкне панӑ. Иккӗмӗш сыпӑкне тупса сӑмах тӑвӑр.

| | | |
|---|---|---|
| пӑ- | ла- | вӑр- |
| та- | ҫу- | хӑ- |

Тӗслӗх: *Пӑ-та.*

*24-мӗш хӑнӑхтару.* Кунта икӗ сыпӑклӑ сӑмахсен юлашки сыпӑкне панӑ. Малтанхи сыпӑкне тупса сӑмах тӑвӑр.

| | | |
|---|---|---|
| -кан | -ва | -ла |
| -ман | -ша | -ма |

Тӗслӗх: *Та-кан, ҫа-ва.*

*25-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫакӑнта панӑ сӑмах сыпӑкӗсенчен сӑмахсем тӑвӑр.







*26-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫакӑнта кӑтартнӑ пек клеткӑсем тӑвӑр, вӗсен ӑшне аяларах кӑтартса панӑ сӑмах сыпӑкӗсене ҫырӑр. Вӑл сыпӑксенчен сӑмахсем пулччӑр.






С**ă**мах сыпăкĕсем: *мĕр, лĕ, ха, сÿ, хÿ, ÿп.*

*27-мĕш хăнăхтару.* Çак клеткăсенчи сăмах сыпăкĕсене суйласа илсе сăмахсем тăвăр. Çав сăмахсене çырăр.

| | | | |
|---|---|---|---|
| ар | па | ка | çыр |
| ça | ман | ва | на |
| кăм | та | çу | ма |

Тĕслĕх: Арман. Çава.

## 6 §. Сăмахсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси.

Çырнă чухне сăмах пĕр йĕркене вырăнаçмасан, унăн пĕр йĕркене кĕмен сыпăкне тепĕр йĕркене куçарса çыраççĕ.

Сăмаха пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарнă чух кĕске йĕр ( - ) лартаççĕ.

Сăмахсене сыпăкăн-сыпăкăн çеç куçараççĕ.

*вăр-ман* *кĕ-неке*
*пу-кане* *кĕне-ке*
*пука-не* *ху-рăн*

Сăмах пуçламĕшĕнче пĕр саспаллиллĕ сыпăк пулсан, ăна малтанхи йĕркене уйăрса хăвармаççĕ. Сăмах вĕçĕнче пĕр саспаллиллĕ сыпăк пулсан, ăна тепĕр йĕркене куçармаççĕ.

*эреш-мен, ра-дио.*

*28-мĕш хăнăхтару.* Çак сăмахсене çырса илĕр. Вĕсене, пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарас пулсан, мĕнле уйăрмаллине кĕске йĕрпе паллă туса кăтартăр.

Кĕнеке, хаçат, пĕлĕт, хула, хапха, вăрман, çаран, тырă, тылă, сулă, çырма, çырла, салам.

*29-мĕш хăнăхтару.* а) Çак сăмахсене çырса илĕр. Вĕсене, пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарас пулсан, мĕнле уйăрмаллине кĕске йĕрпе паллă туса кăтартăр.

Юлташ, пилеш, хурçă, тимĕр, йывăç, учитель, пахча, купăста, япала, улма, урпа, урапа.

ă) Çак сăмахсене çырса илĕр. Вĕсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарнă чухнехи пек сыпăкăн-сыпăкăн уйăрса, кĕске йĕрпе паллă тăвăр.

Пирĕн çемьере тăватă çын. Аллусене супăньпе çу. Пахчара мăкăньтен илемли çук. Мăръерен тĕтĕм тухать. Таньăн кĕнеке пур.

*30-мĕш хăнăхтару.* а) Çак калава çырса илĕр. Сăмахсене, пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарнă чухнехи пек сыпăкăн-сыпăкăн уйăрса, кĕске йĕрпе паллă тăвăр.

## Варук.

Варук шкултан вĕренсе киле таврăннă. Килĕнче йăмăкĕ анчах пулнă. Варук сĕтел хушшине ларнă. Вăл йăмăкне кĕнеке вуласа панă. Йăмăкĕ питĕ савăннă.

ă) Сăмахсене, пěр йěркерен тепěр йěркене куçарнă чухнехи пек сыпăкăн-сыпăкăн уйăрса, çырса илěр.

Тимěр йыттăн сўс хўре.
Юнě пур, чунě çук.

## 7 §. Вěреннине аса илни.

### Юрă.

Касрăм, касрăм пěрене.
Турăм, турăм шурă пўрт.
Шурă пўртре шур сěтел.
Сěтел çинче шур кулач.

*31-měш хăнăхтару.* Çак юррăн сăмахěсене пурте пěрле пěр харăс вулăр.

*32-měш хăнăхтару.* Шутласа пěлěр, çав юрăра миçе предложени?

Малтанхи предложенире миçе сăмах?

Иккěмěш предложенире миçе сăмах?

Виççěмěшěнче миçе сăмах?

Тăваттăмěш предложенире миçе сăмах?

*33-měш хăнăхтару.* Çав юрăри пěр сыпăклă сăмахсене каласа парăр.

Икě сыпăклă сăмахсене каласа парăр.

*34-měш хăнăхтару.* Çав юррах çырса илěр. Сăмахсене, пěр йěркерен тепěр йěркене куçарнă чухнехи пек, сыпăкăн-сыпăкăн кěске йěрпе уйăрса çырăр.

*35-měш хăнăхтару.* Çак сăмахсене, пěр йěркерен тепěр йěркене куçарнă чухнехи пек, сыпăкăн-сыпăкăн уйăрса çырса илěр.

Чěкеç, хурăн, йěкел, йěтěн, йăмра, вăрçă, хурçă, пăшал, пăчкă, пуртă, тунката, укçа, парне, кăвакал, тараса, такан, коньки.

# 8 §. Сасӑсемпе саспаллисем.



Тарас мучи тилӗ тытнӑ.

Ҫак предложенире миҫе сӑмах?

Малтанхи сӑмахне калӑр. Вӑл сӑмахра миҫе сыпӑк?

Малтанхи сыпӑкне калӑр.

Иккӗмӗш сыпӑкне калӑр.

*Та* сыпӑкра миҫе сасӑ? Малта мӗнле сасӑ? Иккӗмӗшӗ мӗнле сасӑ?

Сӑмахсем сасӑсенчен пулаҫҫӗ. Ҫырнӑ чухне сасӑсене саспаллисемпе паллӑ тӑваҫҫӗ.

Сасӑсене эпир итлетпӗр, калатпӑр, сасӑпа юрлатпӑр.
Саспаллисене эпир куратпӑр, вулатпӑр, ҫыратпӑр.

*36-мĕш хăнăхтару.* Çак ыйтусем тăрăх каласа парăр.

*Тарас* сăмахра пурĕ миçе сасă? Вăл сăмахра миçе саспалли?

*Мучи* сăмахра миçе сасă? Миçе саспалли?

*Тилĕ* сăмахра миçе сасă? Миçе саспалли?

*Тытнă* сăмахра миçе сасă? Миçе саспалли?

Варук пахчара мăкăнь татнă.

Каласа парăр:

*Варук* сăмахра миçе сасă? Саспаллийĕсем миçе?

*Пахчара* сăмахра миçе сасă? Миçе саспалли?

*Мăкăнь* сăмахра миçе сасă? Миçе саспалли?

*Татнă* сăмахра миçе саспалли? Миçе сасă? Мĕнле сасăсем?

## Тупмалли юмах.

Пĕчĕкскер, хитрескер,
Çĕр мăкăртса тухнăскер,
Пурçăн тутăр çыхнăскер. **(Кăмпа)**

Çак тупмалли юмаха çырса илĕр. Каласа парăр:

*Тутăр* сăмахра миçе сасă? Миçе саспалли?

*Пурçăн* сăмахра миçе сасă? Мĕнле сасăсем?

*Çыхнăскер* сăмахра миçе сасă? Мĕнле сасăсем? Миçе саспалли?

## 9 §. Чăваш чĕлхинчи саспаллисем (алфавит).

Чăваш алфавитĕнче 37 саспалли.

Саспаллисем пысăккисем (*А, Ă, Б, В...*) тата пĕчĕккисем (*а, ă, б, в...*) пулаççĕ.



ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чувашской АССР

Аа Ӑӑ Бб Вв Гг

*Аа Ӑӑ Бб Вв Гг*

Дд Ее Ёё Ĕĕ Жж Зз

*Дд Ее Ёё Ĕĕ Жж Зз*

Ии Йй Кк Лл Мм

*Ии Йй Кк Лл Мм*

Нн Оо Пп Рр Сс

*Нн Оо Пп Рр Сс*

Çç Тт Уу Ӳӳ Фф

*Çç Тт Уу Ӳӳ Фф*

Хх Цц Чч Шш Щщ

*Хх Цц Чч Шш Щщ*

ъ Ыы ь Ээ Юю Яя

*ъ Ыы ь Ээ Юю Яя*

*37-мӗш хӑнӑхтару.* Алфавитри кашни саспаллипе пуҫланакан икшер сӑмах каласа тухӑр (А—арман, алӑ, алса, Ӑ—ӑса, ӑман тата ыттисем те).

Мӗнле саспаллипе пуҫланакан сӑмахсем ҫук?

*38-мӗш хӑнӑхтару.* Хӑвӑр класри ачасен хушамачӗсене алфавит йӗркипе каласа тухӑр. Мӗнле саспаллипе хушамат тӗл пулмарӗ?

*39-мӗш хӑнӑхтару.* Хӑвӑр класри вунӑ ачан хушаматне алфавит йӗркипе ҫырса парӑр. Хушамачӗсене пысӑк саспаллипе пуҫласа ҫырӑр.

*40-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак сӑмахсене алфавит йӗркипе ҫырӑр. Кашни сӑмах хыҫҫӑн запятой (,) лартӑр.

Алӑк, вӑрман, хӗлле, ӑса, епле, ёлка, йӑмӑк, мамӑк, нӑрӑ, калта, ӗне, чакак, така, ферма, урпа, ӳпре, хачӑ, ҫурла, эрешмен, щётка, ыраш, парта, юман, ялав.

## 10 §. Предложенин малтанхи сӑмахне пысӑк саспаллипе пуҫласа ҫырасси.

**Предложенин малтанхи сӑмахне яланах пысӑк саспаллипе пуҫласа ҫыраҫҫӗ.**

Ҫанталӑк ӑшӑтрӗ. Ҫуркунне ҫитет. Юр ирӗлет. Ҫулсем хуралчӗҫ. Урам тӑрӑх шыв юхать.

Предложенири малтанхи сӑмаха мӗнле саспаллипе пуҫласа ҫырмалла? Предложени хыҫҫӑн мӗн лартмалла?

*41-мӗш хӑнӑхтару.* «Кӗркунне» ятлӑ калава вуласа тухӑр. Предложенисене уйӑрса ҫырса илӗр.

## Кĕркунне.

Кĕркунне çитрĕ кун кĕскелчĕ йывăççем çаралчĕç хир пушанчĕ кунĕпе çумăр çăвать.

*42-мĕш хăнăхтару.* «Хĕлле» ятлă калава вуласа тухăр. Ăçта точка лартмаллине кăтартса парăр. Пысăк саспаллипе çырмалли сăмахсене кăтартăр.

## Хĕлле.

Хĕвел сахал ăшăтать шывсем шăнса ларнă пĕрмай тăман вĕçтерет çынсем ăшă тумтир тăхăнса çÿреççĕ.

*43-мĕш хăнăхтару.* «Шăнкăрч» ятлă калава çырса илĕр. Предложенири пĕрремĕш сăмахне мĕнле саспаллипе пуçласа çыратăр?

## Шăнкăрч.

Ватă сунарçăн алла вĕреннĕ шăнкăрч пулнă вăл пит илемлĕ юрланă старик патне кÿршĕ ачи çÿренĕ вăл шăнкăрч юрланине итлеме юратнă.

### 11 §. Çын ячĕсене, хушамачĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çырасси.

## Выляма чĕнни.

Атя, Ванюк, урама,
унта сана кĕтеççĕ.
Миша, Анна, Хĕветле
вылямашкăн чĕнеççĕ.



Костя, Таня, Катя, Настя, Юра, Миша.

‖ Çын ячĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ. ‖

*44-мĕш хăнăхтару.* а) Çак предложенисене çырса илĕр. Çын ячĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çырăр.

Пирĕн Санюк пит маттур. Вăл ĕçе тĕплĕ тăвать. Анюк аппа Санюка çавăншăн юрататъ.

*45-мĕш хăнăхтару.* Малтан арçын ячĕсене, унтан хĕрарăм ячĕсене çырса илĕр.

Михала, Кĕтерин, Элексей, Иван, Павăл, Наçтук, Кĕркури, Максăм, Варвари, Унтри, Эрхип, Анна, Вера, Якку.

*Арçын ячĕсем:* Михала,...

*Хĕрарăм ячĕсем:* Кĕтерин,...

*46-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисенчи точкӑсем вырӑнне ҫын ячӗсем тупса ҫырӑр.

Эпӗ ... ятлӑ. Манӑн пичче ... ятлӑ. Шӑллӑм ... ятлӑ. Манӑн аппа ... ятлӑ. Йӑмӑк ... ятлӑ.

*47-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак калава ҫырса илӗр. Ҫын ячӗсене пысӑк саспаллипе пуҫласа ҫырмаллине асӑрхӑр.



## Микула шыва кайни.

Микула пӑр ҫинче ярӑннӑ. Сасартӑк пӑрӗ ҫурӑлса кайнӑ. Микула шыва путма пуҫланӑ. Ҫавна Петӗр пичче курнӑ та Микулана шывран туртса кӑларнӑ.

*48-мӗш хӑнӑхтару.* Малтан хӗрачасен ячӗсене, унтан арҫын ачасен ячӗсене ҫырса илӗр.

Naçтаç, Валя, Кĕçтюк, Мĕтри, Сергей, Алтюк, Хĕветĕр, Хĕветле, Петĕр, Павăл, Урине, Кириле.

*Хĕрачасен ячĕсем: ...*
*Арçын ачасен ячĕсем: ...*

**Çын ячĕсемпе хушамачĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ.**

*Иван Павлов. Фёдор Жуков. Анна Петрова. Вера Миронова. Юрий Иванов.*

*49-мĕш хăнăхтару.* Хăвăр юлташăрсен ячĕсемпе хушамачĕсене тетрадь çине çырăр.

## 12 §. Выльăх-чĕрлĕхсен уйрăм ячĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çырасси.

### Улайпа Хураçка.

Пирĕн Улай ятлă йытă пур. Кӳршĕре тата тепĕр йытă пур. Ăна Хураçка тесе чĕнеççĕ. Улайпа Хураçка урамра пĕрле выляççĕ. Вăрмана кайнă чухне эпир Улайпа Хураçкана хамăрпа пĕрле илсе каятпăр.

**Выльăх-чĕрлĕхсен уйрăм ячĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ.**

Хураçка, халех киле кай!
Ну, Шуркка, хытăрах чуп.
Якур Кампур валли вите тунă.

*50-мĕш хăнăхтару.* Калăр:
Хăвăр пĕлекен йытă ячĕсене.
Хăвăр пĕлекен лашасен ячĕсене.

*51-мӗш хӑнӑхтару.* а) Малтан йытӑсен ячӗсене, унтан лашасен ячӗсене ҫырса илӗр.

Кампур, Ҫиҫӗм, Урхамах, Улай, Эскам, Хураҫка, Шуркка, Ҫилҫунат, Сархи, Шарик.

*Йытӑсен ячӗсем.* *Улай, ...*

*Лашасен ячӗсем:* *Ҫиҫӗм, ...*

ӑ) Сирӗн колхозра мӗн ятлӑ лашасем пур? Ячӗсене тетрадь ҫине ҫырӑр.

## 13 §. Япаласем.

### Ёлка.

Пирӗн шкулта ёлка пулчӗ. Ёлкӑна эпир хамӑр илемлетрӗмӗр. Ёлка ҫине нумай теттесем ҫакрӑмӑр. Унта Сивӗ мучи, самолёт, пулемёт, танк, кайӑксем, пуканесем, тата ытти теттесем те ҫакрӑмӑр.



Ёлкӑна пит савӑнӑҫлӑ ирттертӗмӗр. Эпир юрӑсем юрларӑмӑр, сӑвӑсем каларӑмӑр, тӗрлӗ вӑйӑсем выляrӑмӑр.

Каласа парӑр:

Эсир хӑвӑр ёлка ҫине мӗн-мӗн ҫакрӑр?



*52-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫакӑнта ӳкернӗ япаласен ячӗсене каласа парӑр.

*53-мӗш хӑнӑхтару.* Хӑвӑр класри япаласен ячӗсене йӗркипе ҫырса тухӑр.

Ҫапла ҫырӑр:

Класри япаласем: *сӗтел, пукан, партӑсем...* (тата мӗн пур?)

Кашни япалан хӑйӗн ячӗ пур.



Пӳртре мӗнле япаласем пуррине каласа парӑр.

Пӳртри япаласем: *сӗтел, пукан...* (тата мӗн?)

Килкартинче мӗнле япаласем пур?
Пахчара мӗнле ҫимӗҫсем ӳсеҫҫӗ?
Вӑрманта мӗнле йывӑҫсем пур?
Эсир вӑрманта мӗн-мӗн курнӑ?
Сирӗн сумкӑра мӗнле япаласем пур?

Пӳрт, сӗтел, пахча, шкул, парта, вӑрман, хурӑн, лаша, мулкач, кӗпе, сӑхман—ҫаксем пурте япаласем.

*54-мӗш хӑнӑхтару.* Астуса илӗр те каласа парӑр:
Ҫулла пахчара мӗн ӳсет?
Хирте мӗн ӳсет?
Сирӗн колхозра мӗнле выльӑхсем пур?
Сирӗн вӑрманта мӗнле йывӑҫсем ӳсеҫҫӗ?

Япаласем ҫинчен каланӑ чухне яланах кам? (ку кам?), мӗн? (ку мӗн?) тесе ыйтаҫҫӗ.

Ку кам?—Пионер.
Ку мӗн?—Кӗнеке.

*55-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫакӑнта ӳкернӗ япаласен ячӗсене картина ҫинчи йӗркепе ҫырӑр.



Ухӑ, йытӑ, ҫарӑк, хӑяр, мулкач, пулӑ, така, параппан.

*56-мĕш хăнăхтару.* Çырса илĕр.

Варук вăрмана çӳреме юрататъ. Çулла вăл вăрманта кăмпа тататъ, çырла пухатъ. Варук пакша, чĕрĕп, улакатка курнă.

Сăмахпа каласа парăр:
Варук вăрманта мĕн тататъ, мĕн пухатъ?
Варук вăрманта мĕн курнă?

Ачасем йывăç тĕмĕсем хушшинче кайăк йăви тупнă.— Петĕр, пăх-ха, виçĕ кайăк чĕппи!..



Ирхине ачасем татах пырса пăхнă, анчах кайăк йăви пушах пулнă.

---

Каласа парăр:

Камсем вăрманта пулнă? Ачасем йывăç тĕмĕсем хушшинче мĕн тупнă? Йăвара мĕнсем пулнă?

## Тупмалли юмахсем.

Аласăр, пуртăсăр пӳрт турăм.

Çын çинчен калаçнă чухне *кам?* (ку кам?) тесе ыйтаççĕ. Ытти япаласем çинчен каланă чухне *мĕн?* (ку мĕн?) тесе ыйтаççĕ.

*57-мĕш хăнăхтару.* Малтан *кам?* тесе ыйтакан сăмахсене, унтан *мĕн?* тесе ыйтакан сăмахсене çырăр.

Рабочи, çурт, арçын, хĕрарăм, пахча, курак, атте, анне, лаша, кĕнеке, шăллăм, кайăк, йăмăк, çĕвĕç, тупă, кимĕ, лётчик, тракторист.

*58-мĕш хăнăхтару.* Çак калава вуласа тухăр та малтан *кам?* тесе ыйтакан сăмахсене çырса илĕр. Унтан *мĕн?* тесе ыйтаканнисене çырăр.

## Çырлана кайни.

Çанталăк уяр пулнă. Иван, Петĕр тата Марук вăрмана çырлана кайнă. Вĕсемпе пĕрле йытти чупса пынă. Вăрманта çырла нумай пулнă. Вĕсем часах кунтăксене тултарнă.

Вăрманта ачасем чĕрĕп курнă. Петĕр тата мулкач курнă.

## 14 §. Тĕрлĕ япаласем.

Каласа парăр.

Хĕлле эсĕ мĕн тăхăнса çÿретĕн? Çулла мĕн тăхăнатăн?

Эсир мĕнле йышши тумтирсем пĕлетĕр? (кĕрĕк, сăхман...).

Плотникăн мĕнле ĕç хатĕрĕсем пулаççĕ?
Столярăн мĕнле ĕç хатĕрĕсем пулаççĕ?
Тимĕрçĕн мĕнле ĕç хатĕрĕсем пулаççĕ?
Çĕвĕçĕн мĕнле ĕç хатĕрĕсем пулаççĕ?

---

Эсир мĕнле тискер кайăксене пĕлетĕр?
Мĕнле вĕçен кайăксене пĕлетĕр?

*59-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак япаласен ячӗсене ӳкерчӗкре кӑтартса панӑ йӗркепе ҫырса илӗр.



Сӑмахсем: *витре, сурӑх, пукан, качака, стакан, сӗтел, кӑвакал, хур.*

*60-мӗш хӑнӑхтару.* Сасӑпа вуласа тухӑр та пахча-ҫимӗҫсен ячӗсене ҫырса илӗр.

## Ҫырласемпе пахча-ҫимӗҫсем.

Ҫӗрҫырли, купӑста, хӑяр, хурлӑхан, ҫарӑк, кишӗр, ҫӗрулми, хурӑнҫырли, кӑшман, пӗрлӗхен, ҫӗмӗрт, сухан.

*61-мӗш хӑнӑхтару.* Класра кирлӗ япаласен ячӗсене ҫырса илӗр.

Парта, плуг, трактор, пукан, класс доски, сӗтел, кӗрепле, сенӗк, кӗнеке, ҫурла, ручка, чернильница, ҫуна, урапа, тетрадь, перо, кӑранташ.

*62-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫакӑнта панӑ сӑмахсенчен кун ячӗсене йӗркипе ҫырса илӗр.

Хӗлле, юр, тунтикун, сивӗ, каҫ, ытларикун, кӑнтӑрла, юнкун, ир, кӗҫнерникун, ҫуркунне, эрнекун, вӑрман, хир, шӑматкун, ҫулла, юханшыв, вырсарникун.

*63-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак япаласене пӗрлештерсе пӗр сӑмахпа калӑр.

Хыр, чӑрӑш, хурӑн, хурама, юман, ҫӑка, шӗшкӗ, пилеш—...
Кӑрӑҫ, ӑвӑс кӑмпи, ҫерем кӑмпи—...
Уланкӑ, карас, ҫӑрттан—...
Курак, шӑнкӑрч, чӗкеҫ—...
Упа, кашкӑр, тилӗ—...

Сӑмахсем: *пулӑсем, кӑмпасем, йывӑҫсем, тискер кайӑксем, вӗҫен кайӑксем.*

Ҫапла ҫырӑр:

Хыр, чӑрӑш, хурӑн, хурама, юман, ҫӑка, шӗшкӗ, пилеш—йывӑҫсем.

*64-мӗш хӑнӑхтару.* Вуласа тухӑр, унтан ҫакӑнта кӑтартнӑ пек ҫырӑр.

Кайӑк йӑва ҫавӑрать.
Шӑши...шӑтарать. Пакша... шырать.

(шӑтӑк, хӑвӑл).

*65-мĕш хăнăхтару.* **Вуласа тухăр та калăр.**

## Эсир мана пĕлетĕр-и?



Эпĕ хăвăлта пурăнатăп. Эпĕ мăйăр, çырла, кăмпа çиетĕп. Манăн кĕрĕк ăшă. Хӳре çемçе çăмлă.

*66-мĕш хăнăхтару.* **Çак предложенисенчи япаласене мĕнле ыйту памалла?**

(*Мĕн?*) Хĕвел тухрĕ. (*Мĕн*(*?*) Каç пулчĕ. Хĕвел (*Мĕн?*) анчĕ. Аппа(?) ĕçрен таврăнчĕ. Анне (?) апат пĕçерчĕ. Йытă (?) вĕрет. Юлташ (?) килчĕ. Уйăх (?) хăпарчĕ. Пионер (?) тăрăшать.

### 15 §. Кам мĕн тăвать?

*67-мĕш хăнăхтару.* **Çак ӳкерчĕксем çине пăхса кам мĕн туни çинчен калăр.**



Йытă мĕн тăвать?
Мулкач мĕн тăвать?
Сунарçă мĕн тăвать?

*68-мĕш хăнăхтару.* Кам мĕн туни çинчен каласа çырса парăр.

Учитель мĕн тăвать?
Вĕренекен мĕн тăвать?
Тимĕрçĕ мĕн тăвать?
Тракторист мĕн тăвать?
Пулăçă мĕн тăвать?

Çапла çырăр:

*Учитель ачасене вĕрентет.*

*69-мĕш хăнăхтару.* Çакăнта лаша çинчен çырнă пек, ытти выльăхсемпе кайăксем мĕнле сасă пани çинчен каласа çырăр.

Лаша кĕçенет. Ĕне... Сурăх... Качака... Сысна... Автан... Кăвакал... Кашкăр... Упа...

Кирлĕ сăмахсем: *кĕçенет, мĕкĕрет, макăрать, çухăрать, мекеклет, авăтать, улать, нартлатать.*

> *Вĕренет, туптать, сухалать, кĕçенет*—çак сăмахсем пурте япаласем **мĕн тунине** пĕлтерекен сăмахсем.

*70-мĕш хăнăхтару.* Çырса илĕр. Кам мĕн туни çинчен калакан сăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Хĕвел тухрĕ. Тул çутăлчĕ. Ял вăранчĕ. Колхозниксем уя кайрĕç. Ачасем урамра выляççĕ. Выльăхсем улăхра çӳреççĕ. Вăрманта кайăксем юрлаççĕ.

*71-мĕш хăнăхтару.* Кирлĕ сăмахсем хушса предложенисем туса çырăр.

Çиçĕм... Аслати... Çил... Çумăр... Шыв... Хĕвел...

Хушмалли сăмахсем: *çиçет, вĕрет, авăтать, çăвать, пăхать, юхать.*

Çапла çырăр:

*Çиçĕм çиçет.*

*72-мĕш хăнăхтару.* Çак картинка тăрăх предложенисене кирлĕ сăмахсемпе тултарса çырăр.



Вăйлă çил...
Пĕр ача шкула...
Унпа пĕрле йытти...

Сăмахсем: *каять, чупса пырать, вĕрет.*

*73-мĕш хăнăхтару.* Çакăнта панă сăмахсене пĕр-пĕринпе майлаштарса, кам мĕнле çӳрени çинчен каласа çырăр.

Кайăк вĕçет. Пулă... Хурт... Йытă... Шапа...

Сăмахсем: *вĕçет, шăвать, ишет, чупать, сикет.*

## 16 §. Картинăпа ĕçлесси.



*74-мĕш ханăхтару.* Картинăна пăхса тухăр.

Картина çине камсене ӳкернĕ? Пурĕ миçе ача? Вĕсен ячĕсене каласа тухăр.

Çак ыйтусем çине ответсем парăр:

Нина мĕн тăвать? *çумлать*
Валя мĕн тăвать? *шăварать*

Миша мĕн тăвать? *шыв çĕклет*
Верук мĕн тăвать? *çум çĕклет*
Лисук мĕн тăвать? *çĕре кăпăшкалать*

*75-мĕш хăнăхтару.* Йытăпа икĕ улакурак çинчен картинăсем ӳкернĕ йĕркепе çырса илĕр.



## Йытăпа икĕ улакурак.

Пĕр улакуракĕ йытта хӳринчен пырса сăхнă.
Икĕ улакурак вĕçсе пынă.
Пĕр йытă какай çиме тытăннă.
Тепĕр улакуракĕ какайне хыпса илнĕ.
Икĕ улакуракĕ те вĕçсе кайнă.

*76-мĕш хăнăхтару.* Картинăна пăхса тухăр.



Ачасем шкултан таврăннă.

Сивĕпе вĕсен пичĕсем хĕрелнĕ.

Акă, хўрине вылятса, вĕсене çăмламас кĕтсе илет.

Вĕсем Улая ачашларĕç.

Улайĕ те хĕпĕртет.

---

Çак картинăна мĕнле ят пама пулать?

Статьяран кирлĕ предложенисем тупăр.

## 17 §. Япаласем çинчен, вĕсем мĕн туни çинчен аса илни.

### (Калаçупа çыру).

Класра мĕн-мĕн пур?

Класра сĕтел-пукан йышши япаласенчен мĕн-мĕн пур?

Класра вĕренес ĕçре кирлĕ япаласенчен мĕнле япаласем пур? Вĕсен ячĕсене каласа парăр.

Ачасем урисене мĕн тăхăннă? Çине мĕн тăхăннă?

Класра йывăçран тунă мĕнле япаласем пур? Тимĕртен тунă мĕнле япаласем пур? Мĕнле кĕленче савăтсем пур?

Класра мĕн ларать? Мĕн выртать?

Мĕн çакăнса тăрать?

Кам калаçать? Кам итлет?

*77-мĕш хăнăхтару.* Ыйтусене хирĕç ответ парăр.

Ку мĕн?

Ăна кам тунă?



Сĕтел мĕн тăвать?

Сĕтел хушшинче кам ларать?

Çак партăна хăвăр тетрадьсем çине ÿкерĕр. Ыйтусене хирĕç ответсем парăр.

Ку мĕн?



Партăсем хушшинче камсем лараççĕ?

## 18 §. Уçă сасăсемпе хупă сасăсем.

### Пулă. Ыраш. Хачă. Хыр. Шыв. Ĕне.

Çак сăмахсене сасăпа вуласа тухăр. Унтан каласа парăр.

1. *Пулă* сăмахра миçе сыпăк? Пĕрремĕш сыпăкне калăр. Иккĕмĕш сыпăкне калăр.

*Пу* сыпăкра миçе сасă? Малтанхи сасса калăр. Иккĕмĕш сасса калăр.

*Лă* сыпăкра миçе сасă? Малтанхи сасса калăр. Иккĕмĕш сасса калăр.

2. *Ĕне* сăмахра миçе сыпăк? Малтанхи сыпăкне калăр. Иккĕмĕш сыпăкне калăр.

*Не* сыпăкра миçе сасă? Малтанхи сасса калăр. Иккĕмĕш сасса калăр.

3. *Ĕне* сăмахра пурĕ миçе сасă? *Пулă* сăмахра миçе сасă? Вĕсене уйрăммăн каласа тухăр.

Сасăсем икĕ тĕслĕ пулаççĕ: уçă сасăсем тата хупă сасăсем. Уçă сасăсене çăвара уçарах калатпăр. Вĕсене вăрăммăн тăсса калама пулать, юрлама та пулать: *а, ă, у, ы, и, у, ӳ, о, ы, э.*



а



о

Хупă сасăсене эпир уçă сасăсемпе пĕрле калатпăр. Вĕсене çăвара хупарах калатпăр. Хупă сасăсене уйрăммăн калама йывăр, юрлама та çук. Хупă сасăсем:

*л, м, н, с, п, р, т, д, к, г, ç, з, ш, ж, ф, х, ц, ч, щ.*

Уçă сасă пĕчченех сăмах сыпăкĕ пулма пултарать, хупă сасă уçă сасăпа пĕрле анчах сăмах сыпăкĕ пулать:

*ĕ-не, у-ра, ра-ди-о*

*78-мĕш хăнăхтару.* Çак сăмахсене вуласа тухăр та сăмахсенчи сасăсене уйрăммăн каласа парăр: малтан уçă сасăсене, унтан хупă сасăсене калăр.

Хула, урам, пӳрт, кушак, атă, шкул.

## 19 §. Уçă саспаллисем.

### Лисукпа пукане.

Лисук пуканене вĕрентнĕ:
— Саспаллисене вĕрен!



Ку *а* саспалли.
Ку *ă* саспалли.
Ку *е* саспалли.
Ку *ĕ* саспалли
Ку *ё* саспалли.
Ку *и* саспалли.
Ку *о* саспалли.
Ку *у* саспалли.
Ку *ӳ* саспалли.
Ку *ы* саспалли.
Ку *э* саспалли.
Ку *ю* саспалли.
Ку *я* саспалли.

Уçă сасăсене пĕлтерекен саспаллисем вунвиççĕ. Вĕсем çаксем: *а, ă, е, ĕ, ё, и, о, у. ӳ, ы, э, ю, я.*

**Вĕсене уçă сасăсем теççĕ.**

*79-мĕш хăнăхтару.* **„Çамрăк сунарçă" ятлă калава çырса илĕр. Уçă саспаллисене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.**

### Çамрăк сунарçă.

Манăн пичче—сунарçă. Кĕркунне вăл кайăк кăвакал тытать. Хĕлле мулкач тытать. Пĕрре вăл тилĕ те тытса килчĕ.

*80-мĕш хăнăхтару.* „Упа" ятлă калава çырса илĕр. Сăмахсенчи усă саспаллисене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

## Упа.

Çуркунне çитрĕ. Хĕвел ăшăтса пăхма пуçларĕ. Юр ирĕлме тытăнчĕ. Упа ăшша туйса илчĕ. Вăл шăтăкран йăраланса тухрĕ те çимĕç шырама утрĕ.

*81-мĕш хăнăхтару.* „Çуркунне" ятлă сăвва вуласа тухăр та каласа парăр: çак сăввăн сăмахĕсенче кашнинче миçешер усă саспалли?

Унтан „Çуркунне" сăвва çырса илĕр те усă саспаллисене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

## Çуркунне.

Килчĕ ырă çуркунне,
килчĕ, ячĕ ăшăтса.
Хĕвел савать тĕнчене,
хĕл ыйхинчен вăратса.

*82-мĕш хăнăхтару.* „Çуркунне" сăвăри сăмахсене тата тепĕр хут çырса илĕр. Сăмахсене сыпăкăн-сыпăкăн уйăрăр.

Сăмахра миçе усă сасă, сăмах сыпăкĕсем те çавăн чухлех пулаççĕ:

*хĕ-вел, çур-кун-не, ы-рă, тĕн-че.*

*83-мĕш хăнăхтару.* Сăмахсене сыпăкăн-сыпăкăн уйăрса çырса илĕр.

## С а д.

Пирĕн шкулăн сад пур. Унта улмуççисем ӳсеççĕ. Çырла йывăççисем те пур. Çуркунне вĕсем питĕ илемлĕ çуралаççĕ.

*84-мӗш хӑнӑхтару.* Ӳкерчӗксем айӗнчи сӑмахсене çырса илӗр. Сӑмахсен пуçламӗш саспаллисене хӑвӑр пӗлсе çырӑр.



*- лав* *- лка* *- ман*

*- нкӑ* *- са* *- решмен*

*85-мӗш хӑнӑхтару.* Ӳкерчӗк айӗнчи сӑмахсене çырса илӗр. Сӑмахсен вӗçӗнчи саспаллисене хӑвӑр пӗлсе çырӑр.



*качак-* *ӗн-* *пӑр-*

*çӑмарт-* *пер-* *кӑси-*

## 20 §. Хытă тата çемçе уçă сасăсем.

**Хир** варринче **хыр** ӳснĕ. **Тилĕ** чупать. **Тына** пăру мĕкĕрет.

хир—хыр, тилĕ—тырă, тимĕр—тымар.

Хурапа паллă тунă сăмахсене асăрхаса пăхăр. Вĕсенчен пĕр йышши уçă сасăсем хăй хыçĕнче е умĕнче тăракан хупă сасса çемçетеççĕ, тепĕр йышшисем—хытараççĕ.

> Хăйпе юнашар тăракан хупă сасăсене çемçетекен уçă сасăсене çемçе уçă сасăсем теççĕ.
>
> Çемçе уçă сасăсем: *э* (*е*), *ĕ*, *ӳ*, *и*.
>
> Ытти уçă сасăсем хăйпе юнашар тăракан хупă сасăсене çемçетмеççĕ. Ун пек сасăсене хытă уçă сасăсем теççĕ.
>
> Хытă уçă сасăсем: *а*, *о*, *у*, *ă*, *ы*.
>
> Кусемсĕр пуçне тата *й* саса уçă сасăпа пĕрлешсе пулнă саспаллисем пур.
>
> Вĕсем çаксем: *е* (*йэ*), *ё* (*йо*), *ю* (*йу*), *я* (*йа*).

*86-мĕш хăнăхтару.* Çак сăмахсене çырса илĕр. Çемçе уçă сасăсене аялтан çинçе йĕр туртса паллă тăвăр.

Ене, лаша, сурăх, путек, путене, чĕпĕ, çĕлен, калта, кайăк, чĕкеç, шăнкăрч, чĕрĕп, çерçи.

*87-мĕш хăнăхтару.* Çак сăмахсене çырса илĕр. Хытă уçă сасăсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Урпа, ыраш, пăри, тулă, вир, кантăр, йĕтĕн, çырла, çĕрулми.

Хут, кăранташ, кĕнеке, картина, машина.

*88-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак сӑвва ҫырса илӗр. Ҫемҫе уҫӑ сасӑсене пӗр йӗр туртса, хытӑ уҫӑ сасӑсене икӗ йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

Колхоз акрӗ, сӗлӗ акрӗ,
сӗлли пулчӗ хӑмӑш пек.
Лавӑн-лавӑн тырри пулчӗ,
пӗрчи пулчӗ пӑрҫа пек.

*89-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Ҫемҫе уҫӑ сасӑсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

Сарлака ҫаран. Симӗс ҫерем. Сывӑ ҫын. Сивӗ ҫил. Хура лаша. Хӗрлӗ ӗне.
Тимӗр йыттӑн сӳс хӳре.

*90-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак калава ҫырса илӗр. Хытӑ уҫӑ сасӑсем тӗл пулакан сӑмахсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

## Пытанмалла выляни.

Ачасем пытанмалла выляҫҫӗ. Кӗркури улӑм ӑшне пытаннӑ. Татюкпа Варук лупас айне пытаннӑ. Пӗчӗк Палюк пусма айне кӗрсе ларнӑ.
Ваҫук вӗсене шыранӑ.

*91-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак статьяна ҫырса илӗр. Ҫемҫе уҫӑ сасӑсене аялтан пӗр йӗр туртса, хытӑ уҫӑ сасӑсене икӗ йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

## Колхозра.

Хӗвел хӗрелсе тухрӗ. Колхозниксем еҫе кайма хатӗрленеҫҫӗ. Колхозра кашни

çулах тыра лайăх пулать. Колхозра ăратла выльăх усраççĕ.

## 21 §. Хупă саспаллисем.

Хупă сасăсене кăтартакан паллăсене хупă саспаллисем теççĕ.

Хупă саспаллисем 22. Вĕсем çаксем:

*б, в, г, д, ж, з, й, к, л, м н, п, р, с, ç, т, ф, х, ц, ч, ш, щ.*

*92-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвва çырса илĕр. Хупă саспаллисене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

### Пионер юрри.

Танкăр-танкăр танкăртатрĕ
параппан сасси.
Ян-янах янăрарĕ
пионер юрри.
Параппан çапни
хытă янăрать.
Пионер ушкăнĕ
хавассăн пырать.

*93-мĕш хăнăхтару.* Çак сăмахсене çырса илĕр. Хупă саспаллисене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Вăрçă. Тăшман. Тупă. Пулемёт. Ялав. Çĕнтерӳ. Салтак. Офицер.

*94-мĕш хăнăхтару.* Хупă саспаллисемпе пуçланакан сăмахсем (кашни саспаллипе пĕрер сăмах) тупса калăр.

*95-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫакӑнта панӑ сӑмахсенчен предложенисем туса ҫырӑр. Сӑмахсенчи хупӑ саспаллисене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

Юр. Шыв. Хӗвел. Йывӑҫсем. Курӑк. Чечексем. Кайӑксем.

Хушмалли сӑмахсем: *ӳсет, ешереҫҫӗ, вурӑлаҫҫӗ, хӗртет, юхать, ирӗлет, юрлаҫҫӗ.*

Ҫапла ҫырӑр: *Юр ирӗлет.*

## 22 §. Ҫемҫетекен паллӑ (ь) ҫырасси

Ҫак предложенисене вуласа тухӑр.

Паллӑ тунӑ сӑмахсенче *т, л, н* сасӑсем мӗнле илтӗнеҫҫӗ: хытӑ-и, ҫемҫе-и?

**Выльӑхсем** ешӗл курӑк ҫинче ҫӳреҫҫӗ. Пахчара **мӑкӑнь** чечекӗсем ҫурӑлма пуҫларӗҫ. **Учитель** пире ҫуллахи кунсенче чечексем пухма хушнӑччӗ.

Асӑрхаса пӑхӑр: *выльӑхсем, мӑкӑнь, учитель* сӑмахсенче мӗнле паллӑ ларать?

> *А, ы, ӑ* сасӑллӑ сыпӑксем ҫемҫен илтӗнеҫҫӗ пулсан, ҫемҫетекен паллӑ (ь) ҫыраҫҫӗ.
>
> *Пӑхать, мӑкӑнь, выльӑх.*

Ҫакӑн пек сасӑллӑ сыпӑксенче ҫемҫетекен паллӑ (ь) ҫырмасан е урӑх сӑмах пулать, е сӑмахӗ тӗрӗс мар илтӗнет.

Тĕслĕхсем:

| | |
|---|---|
| Çунать. | Типĕ вутă çунать. |
| Çунат. | Кайăкăн çунат пур. |
| Турать. | Анне купăста турать. |
| Турат. | Йывăçăн турат пур. |
| Анать. | Урам тăрăх анаталла шуса анать пĕр çуна. |
| Анат. | Эпир урамăн анат вĕçĕнче пурăнатпăр. |
| Канать. | Ывăнсан, кайăк та ларса канать. |
| Канат. | Сӳсрен явнă канат çирĕп. |
| Мăкăнь. | Мăкăнь çеçки çурăлсан, килет пахча илемĕ. |
| Мăкăн. | Мăкăн çырли пулмасть. |

*96-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна çырса илĕр. Çемçетекен паллăпа пĕтекен сăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

# Тихасем.

Колхозăн тихасем нумай. Тихасене Хветюк пичче пăхать. Вăл тихасене апат парать, шăварать, хырчăкласа тасатать.

*97-мĕш хăнăхтару.* Аса илĕр: çемçетекен паллăллă сăмаха пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарнă чухне çемçетекен палла ь хăй умĕнче тăракан саспаллисенчен уйăрма юрать-и?

Çак сăмахсене çырса илĕр, вĕсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарнă чухне мĕнле уйăрмаллине кĕске йĕрпе паллă туса кăтартăр.

Тĕслĕх: *Конь-ки.*

Коньки, пальто, больница, Григорьев, букварьте, июньти, октябрьти.

*98-мĕш хăнăхтару.* Çак тупмалли юмахсене çырса илĕр: **ь** паллăллă сăмахсене аялтан туртăр.





Мăр-мăр, çамки
хăмăр,
куçĕсем çутă,
чĕрнисем çивĕч.
Кас пулсан,
кайăка каять,
шăшисем тытать.

Куçне чарнă, ларать,
темĕнле калаçать,
пăрçа пек сикет,
этемле ишет.

*99-мĕш хăнăхтару.* Хăвăр тетрадьсем çине çулталăк хушшинчи уйăх ячĕсене йĕркипе çырса парăр. Ăçта **ь** çырмаллине асăрхăр.

Январь, февраль, март, апрель, май, июнь, июль, август, сентябрь, октябрь, ноябрь, декабрь.

## 23 §. Э, е, ё, ю, я саспаллиллĕ сăмахсене çырасси.

Эрнере çичĕ кун. Эпир вĕренетпĕр. Паян эрнекун. Эрешмен упаленет.

| | | | |
|---|---|---|---|
| эпĕ | эрне | эпир | этем |
| эсĕ | эрешмен | эсир | эмел |

*Э* саспаллине сахал сăмахсенче çыраççĕ. Чăваш чĕлхинче сăмах пуçламĕшĕнче çеç çыраççĕ.

*— Эй, кам унта? — Ку эпĕ.*

*— Кам эсĕ? — Эпĕ Мишук.*

*100-мĕш хăнăхтару.* Предложенисене çырса илĕр. *Э* саспаллисене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Эпир шкулта эрнере ултă кун вĕренетпĕр. Эпĕ тăрăшса вĕренетĕп. Энтри те тăрăшса вĕренет.

Куракксенчен эмел тăваççĕ. Эрнекун çумăр çурĕ.

Сăмахсенче *йэ* сасăсем илтĕнсен, вăл сасăсем вырăнне *е* саспалли çыраççĕ. *Е* саспалли сăмах пуçламĕшĕнче те, сăмах варринче те, сăмах вĕçĕнче те пулма пултарать.

| | | |
|---|---|---|
| *Ехрем* | *разъезд* | *мăрье* |
| *ешĕл* | *çемьере* | *чее* |

*101-мĕш хăнăхтару.* Предложенисене çырса илĕр. Сăмахсенче *е* саспалли мĕнле илтĕннине каласа парăр.

Кăнтăр енчен çил вĕрет. Епле ăшă çил!

Тилĕ питĕ чее. Çемьере чи кĕçĕнни — эпĕ. Манран асли — Елюк.

Çырман пĕр енчен тепĕр енне каçатпăр.

*102-мĕш хăнăхтару.* ***Е*** (***йэ***) саспаллиллĕ сăмахсем пиллĕк тупăр, предложенисем туса тетрадьсем çине çырăр.

Сăмахсенче *йо* саспаллисем илтĕнсен, вăл сасăсем выранне *ё* саспалли çыраççĕ. *Ё* саспаллине вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсенче çыраççĕ.

*Ёлка* *самолёт*
*лётчик* *пулемёт*

*103-мĕш хăнăхтару.* Предложенисене çырса илĕр. *Ё* саспаллине аялтан туртса паллă тăвăр. Сăмахсенче *ё* саспаллине мĕншĕн çырнине каласа парăр.

Лётчик самолётпа вĕçет. Пирĕн шкулта ёлка пулчĕ. Пётр Иванов пионер. Кăçал районта пионерсен слёчĕ пулчĕ. Манăн пичче пулемётчик.

Сăмахсенче ***йу*** сасăсем илтĕнсен, вăл сасăсем выранне *ю* саспалли çыраççĕ. *Ю* саспалли сăмах пуçламĕшĕнче те, сăмах варринче те, сăмах вĕçĕнче те пулма пултарать.

*юман* *юлташ* *каю*
*юмах* *юрă* *хăю*

*У* сасă умĕнчи хупă сасă çемçе илтĕннĕ чухне те *ю* саспалли çыраççĕ.

*Анюк* *Илюш* *Натюк*
*Ванюк* *Палюк* *Елюк*

*104-мĕш хăнăхтару.* Предложенисене çырса илĕр. *Ю* саспаллисене аялтан туртса паллă тăвăр. Сăмахсенче мĕншĕн *ю* саспалли çырнине каласа парăр.

Юр çăвать те каллех ирĕлет. Ман пата юлташ кĕчĕ. Юмах юпа тăрринче,

хам урхамах çинче. Ванюкпа Петюк вăрмана кайрĕç. Анюк амăшне пулăшать.

*105-мĕш хăнăхтару. Ю* саспаллилле пилĕк сăмах тупăр та предложенисем туса тетрадьсем çине çырăр.

Сăмахсенче *йа* сасăсем илтĕнсен, вăл сасăсем вырăнне *я* саспалли çыраççĕ.

*ял* *уяв* *туя*
*ят* *хăяр* *кăсия*

Сăмахра *а* умĕнчи хупă сасă çемçе илтĕннĕ чухне те *я* саспалли çыраççĕ.

*Валя* *атя* *Лява*
*выля* *няня* *Саня*



*106-мĕш хăнăхтару.* Ӳкерчĕк тăрăх калав тăвăр. Кунта камсене ӳкернĕ? Ячĕсене каласа тухăр.

Ачасем мĕн тунă? Армана вĕсем ăçта лартнă? Арманне вĕсем мĕнле тунă?

*107-мĕш хăнăхтару.* Ӳкерчĕк тăрăх калава тетрадьсем çине çырăр. Сăмахсенчи *э*, *е*, *ё*, *ю*, *я* саспаллисене аялтан туртса паллă тăвăр. Мĕншĕн вăл саспаллисене çырмалли çинчен каласа парăр.

*108-мĕш хăнăхтару.* Предложенисене çырса илĕр. Сăмахсенчи *я* саспаллине аялтан туртса паллă тăвăр, мĕншĕн *я* çырмаллине каласа парăр.

Колхозниксем уя тухрĕç. Паян çанталăк уяр. Яп-яка пăр çинче ярăнма аван. Якур Лявапа пĕрле çӳрет. Шăнкăрав янян янăрарĕ.

## 24 §. Б, г, д, ж, з саспаллисене çырасси.

Çак сăмахсене вуласа тухăр. Сăмахсенче тĕл пулакан *б, г, д, ж, з* сасăсене тĕрĕс вулăр.

Белов, Григорьев, Давыдов, Журавлёв, Захаров, фабрика, бригадир.

> ***Б, г, д, ж, з*** хупă сасăсене вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсенче çеç çыраççĕ.

*109-мĕш хăнăхтару.* Çак сăмахсене вуласа тухăр та çырса илĕр, *б, г, д, ж, з* саспаллисене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр. Çын ячĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çырмаллине асăрхăр.

Автобус, инженер, август, Галкин, звонок, радио, завод, ударник, Александров, Анна Жукова.

*110-мĕш хăнăхтару.* Çак сăмахсене çырса илĕр. Çын ячĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çырмаллине ан манăр.

*Б, г, д, ж, з* саспаллисене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Данилов, Гаврилов, Жирков, Захаров, Дмитриев, библиотека, съезд, объявлени, клуб, сад.

## 25 §. Ф, ц, щ, о саспаллисене çырасси.

*Ф, ц, щ, о* саспаллисене çакăн пек сăмахсенче çыраççĕ:

телефон, телеграф, форточка, фонарь, цирк, Зайцев, революци, щётка, плащ.

*111-мĕш хăнăхтару.* ***Ф, ц, щ, о*** саспаллисене мĕнле сăмахсенче çырнине асăрхăр. Ун пек сăмахсене аялтан туртса паллă тăвăр.

Фабрика столовăйне пирĕн колхоз помидор леçрĕ. Помидор вунă ещĕк пулчĕ. Фабрикăра пирĕн колхозниксем те ĕçлеççĕ. Борис Щукин—слесарь. Вăл стахановец. Фомина Феня—ударница. Вăл пир тĕртнĕ çĕрте ĕçлет.

## 26 §. Вĕреннине пĕтĕмĕшпе аса илни.

*112-мĕш хăнăхтару.* Çырса илĕр. Япаласен ячĕсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

### Çуркунне.

Çуркунне çитрĕ. Кураксем вĕçсе килчĕç. Шăнкăрч та çитрĕ. Хирте тăрисем юрлаççĕ. Юр ирĕлет. Шыв юхать. Вăрман ешерет.

*113-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр. Кам мĕн тунине пĕлтерекен сăмахсене аялтан туртăр.

Хирте тырă ӳсет. Улăхра курăк ешерет. Пахчара чечек çурăлать. Кӳлĕре

пулă ĕрчет. Вăрманта çырла пиçет. Колхозниксем утă çулаççĕ.

*114-мĕш хăнăхтару.* Çак калава вуласа тухăр та малтан япала ячĕсене пĕлтерекен сăмахсене çырса илĕр, унтан çав япаласем мĕн тунине пĕлтерекен сăмахсене çырăр.

## Ирхине.

Автан авăтать. Тул çутăлать. Çил лăпланать. Хĕвел ăшшăн пăхать. Сывлăм типет. Кайăксем илемлĕн юрлаççĕ. Çынсем ĕçе тытăнаççĕ. Ачасем шкула каяççĕ.

*115-мĕш хăнăхтару.* Предложенисене çырса илĕр. Картинăсем вырăнне сăмахсем çырăр.



вăрманта ӳсет.



пахчара ӳсет.



шывра пурăнать.



вăрманта пурăнать.



самолётпа вĕҫет.



шкулта вĕренет.

*116-мĕш хăнăхтару.* Малтан хĕл ҫинчен калакан предложенисене, унтан ҫу ҫинчен калакан предложенисене ҫырса илĕр.

Сивĕсем пуҫланчĕҫ. Йывăҫсем ешĕл ҫулҫăпа витĕнчĕҫ. Ҫырмасем шăнса ларчĕҫ. Ҫеҫенхир ешерет. Кунĕн-ҫĕрĕн юр ҫăвать. Пуҫ тăрринче тăри юрлать. Хирте тырă пулса ҫитет.

*117-мĕш хăнăхтару.* Ҫак калаври предложенисене уйăрса ҫырăр. Предложенисене пысăк саспаллипе пуҫласа ҫырмаллине тата предложени хыҫҫăн точка лартмаллине ан манăр.

## Пăр кайни.

Каҫхине ҫумăр ҫурĕ ирхине Ҫавал пăрĕ кайма пуҫларĕ пăр ҫине пăр пырса ҫапăнать пĕр пысăк пăр ҫинче йытă чупкаласа ҫӳрет хăранипе вăл ниҫта кайса

кĕреймест акă пăр катăкĕ çыр хĕррине пырса тăрăнчĕ йытă пăр çинчен сиксе тухрĕ.

*118-мĕш хăнăхтару.* „Кăмпана кайни" калава вуласа тухăр. Хăш сăмахсене пысăк саспаллипе çырнине асăрхăр.

## Кăмпана кайни.

Çанталăк уяр пулнă. Ванюк тата Палюкпа Варук вăрмана кăмпана кайнă. Вĕсем хыççăн Хураçка та чупса пынă. Вĕсем пĕрер кунтăк кăмпа татнă та киле кайма тухнă. Сасартăк çумăр пĕлĕчĕ хупласа илнĕ. Çиçĕм çиççе янă. Аслати аватма пуçланă. Ачасем аран киле çитсе ÿкнĕ.

*119-мĕш хăнăхтару.* Çак калава вуласа тухăр та малтан икĕ сăмахлă предложенисене çырса илĕр, унтан виçĕ сăмахлă предложенисене çырăр.

## Çумăр хыççăн.

Çумăр чарăнчĕ. Çил лăпланчĕ. Хĕвел хĕртсе пăхать. Çуртсем çинчен тумла юхать. Çырмара шыв кĕрлет. Пахчара кайăксем юрлаççĕ. Ачасем урамра чупса çÿреççĕ. Пĕтĕм халăх савăнать.

*120-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак картинӑна пӑхӑр, унта ӳкернӗ япаласене пурне те каласа парӑр. Вӑл япаласен ячӗсене тетрадьсем ҫине ҫырӑр.



*121-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак картина тӑрӑхах калав туса ҫырӑр. Калавне малтан сӑмахпа каласа парӑр Калава „Пулӑ тытни“ тесе ят парӑр.

*122-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак сӑмахсен ҫитмен сыпӑкӗсене тупса ҫырӑр.

## Пахчаҫимӗҫсем.

Хӑ-... Купӑс-... Ки-... Кӑш-... Ҫа-... Су-... Поми-... Ка-... Ых-...

Сӑмахсем: *купӑста, кишӗр, ҫарӑк, помидор, ыхра, кӑшман, сухан, кавӑн, хӑяр.*

*123-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак калава ҫырса илӗр. Сӑмахсене, пӗр йӗркерен тепӗр йӗркене куҫарнӑ чухнехи пек, кӗске йӗрпе уйӑрӑр.

## Путексем.

Сурӑхсем вӑрман патӗнче ҫӳренӗ. Икӗ путек кӗтӳрен уйӑрӑлса кайнӑ. Тӗм хыҫӗнче кашкӑр пытанса тӑнӑ. Путексем кашкӑр ҫӑварне лекнӗ.

*124-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫырса илӗр. Сӑмахсенчи хупӑ саспаллисене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

## Ҫулла.

Иртсе кайрӗ ҫуркунне. Ҫитрӗҫ ҫу кунӗсем. Хӗвел хытӑ хӗртет. Кайӑксем чӗпӗ кӑларчӗҫ. Ҫарансем ҫинче тӗрлӗ чечексем ялкӑшаҫҫӗ. Хирте тырӑ саралать.

*125-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫырса илӗр. Точкӑсем вырӑнне кирлӗ япала ячӗсене ҫырӑр.

... суха тӑвать. ... сӗт парать. ... аш-какай парать. ... ҫӑм парать. ... ҫӑмарта тӑвать.

С ӑ м а х с е м: Ӗне. Лаша. Сысна. Чӑх. Сурӑх.

*126-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак сӑмахсене пӗр-пӗринпе пӗрлештерсе предложенисем туса ҫырӑр.

Вӗҫен кайӑк... Вӑрман... Шыв... Уйӑх... Ҫумӑр... Кӑвакал... Вутӑ... Пӑр... Курӑк...

Х у ш м а л л и  с ӑ м а х с е м: *ҫунать, вӗҫет, юхать, ишет, ирӗлет, кашлать, ҫутатать, ешерет, ҫӑвать.*

Çапла çырăр:

*Вĕçен кайăк вĕçет.*

*127-мĕш хăнăхтару.* Çак сăмахсене пĕр-пĕринпе пĕрлештерсе, предложенисем туса çырăр.

| | |
|---|---|
| Тусан | улать. |
| Кашкăр | сăхать. |
| Сăпса | вĕçет. |
| Çырла | хуралать. |
| Çĕмĕрт | пиçет. |

*128-мĕш хăнăхтару.* Точкăсем вырăнне кирлĕ сăмахсем çырса, предложенисем тăвăр.

... хĕртсе пăхать. ... вăш-вăш вĕрет. ... шăнкăртатса юхать. ... сиксе вĕрет. ... куçа кĕрет.

Сăмахсем: *çил, хĕвел, йытă, шыв, тĕтĕм.*

*129-мĕш хăнăхтару.* Çак картина тăрăх калав çырăр.



*130-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак калава ҫырса илӗр. Сӑмахсене, пӗр йӗркерен тепӗр йӗркене куҫарнӑ чухнехи пек, кӗске йӗрпе уйӑрӑр.

Пӗрре Микула ашшӗпе пӗрле пулӑ тытма кайнӑ. Вӗсем вӑлтасем тата ӑмансем илнӗ. Вӗсем кунӗпех пулӑ тытнӑ. Каҫхине киле таврӑннӑ.

*131-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак калава ҫырса илӗр. Хупӑ саспаллисене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

Алексей Егоров нумай пулмасть Совет Ҫарӗнчен таврӑнчӗ. Унӑн кӑкӑрӗ ҫинче икӗ орден тата виҫӗ медаль йӑлкӑшаҫҫӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче Алексей Егоров нимӗҫсене хирӗҫ ҫапӑҫнӑ.

*132-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак тӗслӗхсене ҫырса илӗр. Ҫын ячӗсене, хула ячӗсене, пароход ячӗсене аялтан туртӑр.

## Атӑл ҫинче.

Анлӑ та вӑрӑм Атӑл юхса выртать. Атӑл тӑрӑх пароходсем, баржӑсем ҫу каҫипех ҫӳреҫҫӗ. Горький хулинчен Астрахане ҫитиччен: „Владимир Ульянов“, „Клим Ворошилов“, „Дзержинский“, „Парижская Коммуна“, „Гражданин“ ятлӑ пысӑк пароходсем каяҫҫӗ. Пирӗн ялсем Щеглов Фӗдор баржа ҫинче ӗҫлет. Энтри Яккӑвӗ сулӑ юхтарнӑ ҫӗрте ӗҫлет. Щегловӗ Атӑл шӑнсассӑн тин яла таврӑнать.

*133-мĕш хăнăхтару.* Предложенисене çырса илĕр, *э, е, ё, ю, я* саспаллиллĕ сăмахсене аялтан туртăр, мĕншĕн *э, е, е, ю, я* саспаллисем çырнине каласа парăр

Паян эпир экскурсие каятпăр. Пирĕн вăрманта юман та, йĕлме те ӳсет. Епле илемлĕ пирĕн çĕршыв! Юра самолёт тунă. Ванюк пулемёт тăвать. Галя пукане тăвать. Каюра шăтăкра пурăнать. Кăсия вĕçет. Валя юрă юрлать.

*134-мĕш хăнăхтару.* Çак калаври *б, г, д, з, ж, ц, о, ф* саспаллиллĕ сăмахсене çырса илĕр.

Бориспа Женя иккĕшĕ те сакăр çулта. Вĕсем хулара Ленинград урамĕнче пурăнаççĕ. Вĕсен иккĕшин те ашшĕсем „Большевик" заводра ĕçлеççĕ. Борисăн Феня ятлă аппăшĕ пир тĕртекен фабрикăра ĕçлет. Вăл лайăх работница шутланать. Женя Бориссем патне тăтăшах çӳрет. Феня вĕсене фабрикăри пурăнăç çинчен каласа кăтартать.

---

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

Цена 2 руб.

А. Т. ТРОФИМОВ

# ЧУВАШСКИЙ ЯЗЫК

УЧЕБНИК
ДЛЯ I КЛАССА
НАЧАЛЬНОЙ ШКОЛЫ

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары — 1949